П. Афанасьев, Г. Айги, французский поэт Леон Робель и его жена Симона.

Чебоксары, 1988 г.

ХАВХАЛАНУЛЛӐ ТУЙӐМ, ХӖВЕЛЛӖ УҪӐМЛӐХ

Ҫӑмӑл мар литературӑра ят илме, тӑван поэзин ылтӑн кӗрекинче вырӑн тупса ларма. Мӗншӗн ҫӑмӑл мар? Мӗншӗн тесен ҫав кӗрекере пуканӗсене тахҫанах йышӑнса пӗтернӗ. «Кунта Айташ е Энтип, Сементер е Афанасьев килмелле-ха, вӗсене валли вырӑнӗсене хатӗр тытар-ха», — тесе тӑман. Кӗрекере, тепӗр тесен, ятлӑ та сумлӑ ҫынсем ахалех ҫителӗклӗ. Курӑр-ха, кам кӑна ҫук унта: авӑ, ларма хӗрӗ пек сӑпайлӑ Константин Иванов, юнашарах унӑн юлташӗсем: Николай Шупуҫҫынни, Федор Павлов, Тайӑр Тимкки... Ҫуммӑнах — кӑвар чӗреллӗ Ҫеҫпӗл. Авӑ, тӗрӗллӗ чӑваш кӗпи тӑхӑннӑ Шелепи, пурнӑҫӗ тӑршшӗпе тенӗ пекех хурапа шурӑ вылявӗнче пурӑнса та чунне пӗр чӗптӗм те сутман Ҫемен Элкер. Речӗпе малалла кайсан — пиллӗхлӗ Петӗр Хусанкай, хӑй сӑмахӗн вӑй-халне ҫирӗп туйса тӑракан Ухсай Яккӑвӗ, Александр Алка, Стихван Шавлы, Александр Кӑлкан, Алексей Воробьев, Алексей Афанасьев, Валентин Урташ, Ваҫлей Давыдов-Анатри, Георгий Орлов, Георгий Ефимов, Александр Галкин, Геннадий Айхи, Николай Исмуков — каҫарӑр, пурне те асӑнса пӗтерме те май ҫук.Пурте чӑваш халӑхӗ чӗре варринче усракан ятсем. Мӗнле ҫывхармалла вӗсем патне, вырӑн ыйтма мар, сӑмах хушма та пулин мӗнле хӑю ҫитермелле?

«Ҫӗр пичӗ тӑвӑр-им пире? — тенӗччӗ хӑй вӑхӑтӗнче Лутра Пакӑш ялӗнчен тухнӑ вӑрӑм та яштак йӗкӗт, пирӗн хӳхӗм поэтӑмӑр Аркадий Лукин. Чӑнах та, ҫутҫанталӑкӑмӑр уҫлӑх талккӑшӗпе вӑхӑт вӗҫӗмсӗрлӗхӗ пекех аслӑ иккен. Ӗҫле, вӗрен, ҫун, тупта чун пултарулӑхне, сана та асӑрхӗҫ, сана та алӑ парӗҫ.Ҫапла ӑшӗнче турӑ панӑ хӗлхемӗ пуррине туйса илсе, ҫав хӗлхем йыхравӗпе ӗҫе пикенет пирӗн Порфирий Афанасьев, малтан мала уҫӑлса пырать унӑн Тутарстанри Ҫӗнӗ Йӗлмелӗ ялӗнчен тухнӑ сукмакӗ, малтан мала ертсе пырать ӑна

Президент Чувашской Республики Н. Федоров и народный поэт П. Афанасьев на вручении Государственной премии Чувашской Республики. Чебоксары, 2001 г.

умĕнче кăлтăртатса-чупса пыракан çăмхи. Пĕррехинче вăл ăна Хусан хулине çитерет, унти аслă шкулăн чĕлхепе литература уйрăмне вырнаçтарать. Тăван сăмахăн хиврелĕхĕпе çепĕçлĕхне Çарăмсан шывĕ хĕрринче ĕмĕрлĕхех ăша хывнă каччă çапла тĕнче поэзийĕн пахчине кĕрсе каять, унта Дантепе Петрарка, Шекспирпа Байрон, Гетепе Мицкевич, Пушкинпа Лермонтов, Тютчевпа Есенин сăвви-поэмисен асамлă тыткăнне лекет, хăй те чунра капланнă туйăмĕсене сăвăлама тытăнать. Çыракансем татах та пур иккен кунта: педагогика институтĕнчех Ренат Харис студент, Ульяновск облаçĕнчи Çирĕклĕ Кӳлĕ ялĕнче çуралса Пăвара ӳснĕскер, чăвашла та чиперех калаçаканскер, поэзире питĕ маттур ĕçлет, Порфирий сăвă çырнине те пĕлет, унпа час-часах курнăçать. Университетра ав Равиль Файзуллин ячĕ пысăк хисепре: тĕнче çине хăй кусĕпе пăхнипе, пурнăç пулăмĕсене поэзире хăйне майлă сăнарлăхпа кăтартса пама ăнтăлнипе палăрса тăрать вăл.

Çапла пурнăç çăмхи Афанасьева Хусанти «Хĕрлĕ ялав» ятлă чăваш хаçачĕн редакцине илсе çитерет. Пĕрре курать те çамрăк поэт кунта ĕçлекенсене – ĕмĕрлĕхех туслашать вĕсемпе. Редактор заместителĕ Василий Юдин, яваплă секретарь Константин Петров, Валем Ахун сотрудник, тĕрлĕ çĕрте вĕренекен Юрий Айташ, Анатолий Ерусланов çамрăк авторсем, консерватори студенчĕ Геннадий Максимов хăйсен хавхаланулă шухăш-туйăмне пĕр çĕре пĕрлештернĕ иккен кунта. Порфирий те çапла хаçат сотрудникне кĕрĕшет.

Малтанлăха редакцин кивĕ диванĕ çинче пуç айне минтер вырăнне хаçат тĕрки хурса выртса тăрать вăл, апачĕ-çимĕçĕ те йĕркеллĕ тивĕçсе пыраймасть-и, тен, анчах çыравçăсем хушшинче пурăнни, вĕсемпе пĕр ĕç туни, пирвайхи сăвăсем, станпа пичетленсе чăн-чăн хаçат анĕ çине кĕрсе шăнăçни йĕкĕте çунатлантарса ярать. Телее, Хусана Шупашкартан чăваш çыравçисем те пырсах тăраççĕ: Элексей Талвир, Александр Кăлкан, Валентин Урташ нихçан та «Хĕрлĕ ялава» кĕмесĕр иртмеççĕ, унта ĕçлекенсемпе кашнинчех туслăн та ăшпиллĕн калаçса лараççĕ.

Пĕррехинче çапла, 1961 çулта, Тутарстанăн тĕп хулине чăваш писателĕсен пысăк ушкăнĕ пырса çитет. Ушкăнра – Петĕр Хусанкай, Александр Алка, Стихван Шавлы, Илпек Микулайĕ тата ыттисем. Паллах, заводсенче халăхпа тĕл пулнисĕр пуçне вĕсем, яланхи пекех, Хусанти чăваш çыравçисемпе те курнăçаççĕ, вĕсен сăвви-калавне пахалаççĕ, чи лайăххисене Шупашкар хаçачĕ-журналĕ валли хăйсемпе пĕрле илсе каяççĕ, ырă сĕнӳсемпе канашсем параççĕ.

Каçхине вара хулари культура керменĕсенчен пĕринче чăваш поэзийĕн уявĕ пулса иртет. Халăх – лăк тулли. Пурте

На вечере поэзии. Татарский поэт Р. Харис, П. Афанасьев, Ю. Семендер.

Набережные Челны, 1984 г.

Космонавт А. Николаев, П. Афанасьев, Н. Дедушкин.

Звездный городок, станция «Мир», 1988 г.

чăн-чăн поэтсене курасшăн, вĕсен сăввисене итлесшĕн. Акă Порфирий Афанасьева сăмах параççĕ. Студент халăх умне тухать, сăввине калама пуçлать. Анчах тӳрех палăрать: именет çамрăк, сасси питĕ вăтанчăклăн тухать.

— Хăюллăрах пул, — хавхалантарать ăна чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай.— Сăвву лайăх, шăрантар та шăрантар!

Çапла пил илет вунтăххăрти йĕкĕт чăваш поэзийĕн ятсумлă ăстисенчен. Пил илет те — ĕçе пикенет. Аслă шкул хыççăн пĕр кана ачасене вĕрентет вăл, хаçат редакцийĕсенче ĕçлет, Мускаврта малалла вĕренсе ăс пухать, унтан «Хатĕр пул» журналăн, Чăваш кĕнеке издательствин тĕп редакторĕ пулать, пилĕк çул хушши Писательсен союзне ертсе пырать, мире хӳтĕлекенсен республикăри Комитечĕн председатель заместителĕнче, Чăвашрадион тĕп редакторĕнче, республикăри пичет енĕпе ĕçлекен Комитет председателĕн заместителĕнче ĕçлет. Анчах поэтăмăр çакна аван ăнланать: чăн-чăн çыравçа мĕнле вырăнта ĕçленине кура мар, мĕн çырнине кура, мĕнле çырнине кура хаклаççĕ. Афанасьев пултарулăхне хаклас тесен — каламалли сахал мар пирĕн. Унăн пĕр хăйне кăна тивĕçлĕ пахалăх пур. Вăл — уçăмлăх. Хăшĕсем кăйттă ансатлăха уçăмлăх теме пăхаççĕ. Вăл — урăх япала, сăмах, сасă е сăрă купинче искусство чунĕ-чĕмĕ çуккине çирĕплетекен хевтесĕрлĕх вăл. Кунта вара, Порфирий Афанасьев произведенийĕсенче, эпир пысăк ăспа, хавхаланулла туйăмпа çиссе те ешерсе тăракан хĕвеллĕ уçăмлăха куратпăр. Шăп çавнашкал уçăмлăхра улмуççи çеçки шуралса-кĕренленсе çурăлать, çавнашкал сывлăм сыпнă уçăмлăхра этем чунĕ асамлă туйăм ытамне лекет. Çав уçăмлăх вăл — талант, шухăшпа сăмахăн ынатлă пĕрлĕхĕ, ăспа туйăмăн инçе вĕçевĕ. Афанасьев пултарулăхĕнче çак пархатар пирĕн ума поэзире те, прозăра та, драматургире те, публицистикăра та туллин тухса тăрать. «Çарăмсан кĕввисем» е «Чун çути», «Пурăнатăп Атăл хĕрринче» е «Хĕвел хапхи» кĕнекисенчи сăвă-поэмăра, «Вучах», «Пурăн, юрату» кĕнекесенчи калавсемпе повеçĕсенче, 1986 çулта уйрăм кĕнекен тухнă, çав вăхăталлах академи драма театрĕн сцени çинче нумайлăха вырăн йышăннă «Сан ятупа» сăвалла трагедийĕнче татăклăн палăрать писателĕн хĕрӳ гражданлăхĕ, чĕлхе ăсталăхĕ, калас сăмаха меллĕн, хиврен, сулăмлăн çаварса калама пĕлни.

Пурнăç пулăмĕсене ӳкерсе кăтартнă чухне писатель пирĕн хушăра куллен тĕл пулакан япаласенчех çĕннине, шухăша яраканнине тупать, эпир вара, çав хайлава вуласа тухнă хыççăн, япала е пулăм çине çĕнĕ куçпа пăхма тытăнатпăр, ăна хамăр шайпа пахалатпăр, çĕнĕ хак пама пикенетпĕр. Çакă пулать те ĕнтĕ вăл чуна вырăнтан хускатакан хăват, тăван сăмах хăвачĕ. Курăр-ха, сăмахран, кăмăла мĕнле тарăннăн



витермелли çавра хыват поэтăмăр «Ырри кăна юлать пиртен» сăвăра:

Ырри кăна юлать пиртен,
Ырри кăна юлать.
Ырри атте-аннемĕртен,
Ытти — ютран пулать.
Атте-анне тивлечĕпе
Ял-йыш çине тухсан
Атте-анне ятне чипер
Тытса çӳрер ялан.
Ку кам ачи тесе ыйтсан
Ку çавăн теччĕр-и,
Ан çунтăр пирĕншĕн нихçан
Атте-анне чĕри...

Унтан сăвăç чăваш ырсемĕ умĕнчи яваплăх çинчен, ун урлă аслă Раççей çĕрĕ-шывĕ умĕнчи тивĕç-парăм çинчен сăмах хускатать, мĕн çуралса мĕн виличчен чыса тасан упраса пурăнмалли пехиллĕ шухăшпа вĕçлет кун-çул юррине. Халăхăмăр ятне тивĕçлĕ сăмах тупăнни, сăмахне кура çемми çаврăнни, çеммине май хĕлĕхĕ е чĕлĕхĕ ĕнерĕнни поэтăмăр ăсталăхĕ ĕмĕртен йĕркеленнĕ аслă туйăм шайĕнче пулнине çирĕплетет. Çакă пулать те ĕнтĕ вăл халăхлăх палли.

Ырă ят илчĕç Порфирий Афанасьев ăсталанă хайлавсем. «Чун çути» кĕнекери сăвăсемпе поэмăсемшĕн ăна 1982 çултах чăваш çамрăкĕсен Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премине пачĕç.1998 çулта вара вăл чăваш халăх поэчĕн хисеплĕ ятне тивĕçрĕ.1999 çулта Пушкăртстанăн Фатих Карим ячĕллĕ премине, 2001 çулта Чăваш Республикин Патшалăх премине илме пултарчĕ. Сумлăхне кура вăл çырнисем, чăвашра анлăн сарăлнипе пĕрлех, ытти халăхсенче те палăрчĕç. Мускавра вырăсла, Хусанта тутарла кĕнекесем тухрĕç, Киевра — украинла, Минскра — белорусла, Бакура — азербайджанла, Ĕпхӳре — пушкăртла, Якутскра — якутла, Йошкар-Олара — марилле, Софийăра — пăлхарла, Парижра — французла, Лондонра — акăлчанла çуллен тенĕ пек пичетленсе пынине шута илсен çыравçă ĕçĕ тата туллинрех курăнать.

Порфирий Афанасьев чăваш литературин чи хастар хыпарçисенчен пĕри пулса тăчĕ. Ăçта кăна çитмерĕ вăл, мĕнле кăна аудиторире тухса калаçмарĕ пулĕ. Мускаври Лихачев ячĕпе хисепленекен заводра, Ярославльти дизель заводĕнче, Чулхулари «Чайка» акционер пĕрлешĕвĕнче, Черниговри «Химволокно» комбинатра, Остерти строительство техникумĕнче, Белорецкри металлурги комбинатĕнче, Çыранçи Чаллă хулинчи çурт-йĕр комбинатĕнче, Анат Камăри нефтехими комплексĕнче, Кавказри, Балтика тăрăхĕнчи ял-



Сцена из спектакля «Именем твоим» («Сан ятупа»). Автор произведения П. Афанасьев

Встреча на родине в пос. Черемшан. 2004 г.

Автограф дорогим землякам. 2005 г.



хулара, Японири, Китайри, Югославири, Болгарири хуласенче тата ытти нумай çĕрте ĕçлекенсем итлерĕç унăн хĕрӳ сассине. Çăмăл мар вăл Егор Исаев, Борис Олейник, Василь Зуенок, Иван Драч, Аннаберды Агабаев, Имант Зиедонис, Валентин Сорокин, Юрий Кузнецов, Виктор Кочетков, Ренат Харис пек çыравçăсем хушшинче чăваш халăхĕ ячĕпе сумлăн та танлăн калаçасси, анчах та пирĕн Афанасьев çинчен çĕршыври поэзи аксакалĕсем Расул Гамзатов та, Мустай Карим та, Сергей Михалков та яланах ăшшăн асăннă тăрăх элчĕмĕр хăй тивĕçне аван пурнăçлани лайăх курăнать. Чыс та хисеп ăна çавăншăн.

Çăмăл мар литературăра ят илме терĕмĕр эпир сăмах пуçламăшĕнче. Паллах, Турă пилĕпе ĕçлекен çын нихçан та ят илессине тĕпе хумасть, уншăн чи малта — яланах ĕç. Порфирий Афанасьев та çавах. Вăл çырнă кĕнеке, вăл каланă сăмах тăван халăхăн ячĕпе сумне çĕклерĕç. Çавна кура тăван çырулăх кĕреки те поэта хăех чыслă вырăна чĕнчĕ.

Ытарма çук илемлĕ тăванла Тутарстанăмăрăн кăнтăр еннерехри хутлăхĕнче юхса выртакан Çарăмсан шывĕн улăхĕсем çурхи кунсенче: кăвак куçлă ĕшпĕл сенкер тӳпене чуп тăвать, шăнкăрав куракĕ вăйă картинчи сарпикесем пек ретĕн-ретĕн вырнаçнă, çеçкери палан тĕми тавра сырăннă сарпуç чечекĕ тин тухнă чĕпсен сап-сарă кăшăлĕ евĕрех туйăнать. Юнашарах — пыл куракĕ, утмăлтурат, ама хупахĕ, пĕтнĕк, матрӳшке... Çак илемпе çак ырлăха мухтаса ырламан-и-ха пирĕн шеп чĕлхеллĕ Шелепимĕр, çак ынатлăхпа çунатланман-и тĕнче анлăш-тарăнăшне, этем ĕмрин тăршшĕпе сарлакăшне чун витĕр илсе шухăш çаври тăвакан аслă Хасан Туфан? Шăпах çак чечексенчен çыхнă хитре хушпу е пуç кăшăлĕ пек куратăп та эпĕ Порфирий Афанасьев пултарулăхне. Ăна асамлă пахчамăрти вăйпитти улмуççипе танлаштарсан, çутçанталăкăмăр çав йывăçăн кашни пĕр тураттине уйрăм техĕмлĕ те уйрăм сипетлĕ сапан сыпса тĕлĕнтермĕш пуянлăх туса хунине асăрханă пулăттăмăр. Курăсăрччĕ паян: йывăçăмăрăн кашни турачĕ чăваш сăмахлăхĕн пахчине хăйне евĕр ырă сăн-сăпат та, тутă та кӳрет. Шухăш анлăшĕнчен тĕлĕнме философилле никĕс пур унта, поэзин тухатуллă вăйĕпе киленме — Ивановпа Çеçпĕлрен илнĕ танлăхпа çиçĕмлĕх, проза талккишлĕхĕпе паллашма — Илпекпе Уяр кӳнĕ пиçĕ хевте, драма картине кĕме — Павăл Хветĕрĕпе Уçăп Петĕрĕн чун çивĕчлĕхĕпе касса кăларнă сăнарсем, пурнăçпа сăмах ӳнерĕ пирки уй пек аслăн уйлама — ăс виçев ытамĕн сироткинла тĕплĕхпе пĕтĕмлетнĕ очерксемпе статьясем... Çакă вăл — пирĕн пĕрлехи пуянлăх. Ăна кӳрекенĕ, парнелекенĕ — Порфирий Афанасьев ĕçĕ, Порфирий Афанасьев таланчĕ. Тавах ăна.

Юрий СЕМЕНТЕР,
чăваш халăх поэчĕ.